Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско–юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Семендер Юрий Семенович**

**Книга: Почему поёт петух = Автан мĕншĕн авăтать**

**Стихотворение: Çĕнĕ çĕлĕк**

Шур сухаллă, витĕр куçлă Ухтиван
Чĕрĕ тилĕ тытса пынă вăрмантан.

Карчăкне парать вăл кивĕ çĕлĕкне:
– Пер вута, – тет, – эп çĕлетĕп çĕннине.

Мулаххай тем самантрах каять çунса.
Шурсухал ларать мăн çĕçĕ хăйраса.

Ну, тăванăм, – тет вăл пăшăлккă тилле, –
Ташша яр та пирĕн кăмăла çĕкле.

Тилĕ-тус çап çут çĕççе пăхса илет –
Чунĕ кĕрхи çулçă пек тăр-тăр чĕтрет.

Кантăкран кăчăк туртать ăна вăрман,
Ах, епле-ши хăтăлас ку тамăкран?

Шурсухалĕ ал çупмашкăн пикенет:
– Ну, ташла, сан пурăнас куну иртет.

– Ташласса ташлап-ха, – тет ăна тилли, –
Кĕпе кирлĕччĕ эрешлĕ-тĕрĕлли...

Карчăкваскасах уçать хăй арчине,
Шыраса тупать чи капăр кĕпине.
-
– Ай, кĕпи, – тет тилĕ, – чăн та лайăх ку,
Пуçăма валли параймăр-ши хушпу?

Хушпуне те пачĕ карчăк хайхискер.
Пурпĕрех-ха тилĕ ташламасть темскер.

– Кĕвĕ май, – тет, – савăнса сулкалама
Кĕмĕл сулă кирлĕ икĕ аллăма.

Мăшăр сулă тăхăнсан кил хуçине
Вăл каларĕ: – Ну, янрат–ха кĕслӳне...

Тытрĕ вată тĕнкĕл-тĕнкĕл кĕслине,
Шăрантарчĕ чи юратнă кĕввине.

Капăр тилĕ пĕрре юхрĕ юхăм пек,

Хĕрнĕçемĕн хĕрсе кайрĕ çиçĕм пек.

Шурсухалăн чунĕ çу пек ирĕлет,
Карчăкки те ташламашкăн пикенет.

– Ах, уçсамăр, – тет тилли, – чўречĕре,
Пăчăпа кĕç чарăнса ларать чĕрем...
Ватă карчăк кантăка уçса ярать –
Чее тилĕ вăшт кăна тухса тарать.

...Кивĕ çĕлĕк çунса кайнă паçăрах,
Çĕнĕ çĕлĕк – вăрманти сĕм чăтлăхра.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.